# ЛАША ШЫРАНИ

Ӳкерчӗкӗсем М. Ильинӑн



ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ





Пĕр çын хăй айĕнчи лашине висĕ кун шыранă, тет.



Пĕр яла пырса ыйтать, тет:

— Лаша курмарăр-и? — тесе.

— Çук, курмарăмăр, — тесе калаççĕ, тет.



Тата тепӗр яла пырса ыйтать, тет:

— Лаша курмарӑр-и? — тесе.

— Çук, курмарӑмӑр, — тесе калаççӗ, тет.



Ҫапла ялтан яла тек ҫӳрет, тет.

Ҫӳресен, ҫӳресен, пӗр ӑслӑрах ҫынна тӗл пулнӑ, тет те:

— Эсӗ ӑҫта та пулин ют лаша ҫӳренине курман-и? — тесе калать, тет.



— Çук, курман, — тесе каларĕ, тет. — Хăçан çухалчĕ санăн лашу? — тесе ыйтрĕ, тет.

— Паянхипе виçĕ кун ĕнтĕ ак, — тесе каларĕ, тет.

— Лашу мĕн тĕслĕччĕ? — тесе ыйтрĕ, тет, леш çынĕ.

— Шурă улаччĕ, — тесе каларĕ, тет.

— Çак ху айăнтиех мар-и? — тесе ыйтрĕ, тет, лешĕ.



Хайхи ут ҫинчен анса пӑхрӗ, тет те, лашине:



— Çакă, çакă, çакă! — тесе каларĕ, тет.



Лаши çине сиксе утланчӗ, тет те, савӑнса чуптара пачӗ, тет, килне.

